26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
11
ШАМАТКУН
181(6418) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МАЛИНОВСКИНЕ
Генерал-полковника ТОЛБУХИНА

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн войскисем, малалла ăнăçлăн тапăнса пырса, паян сентябрĕн 10-мĕшĕнче БАРВЕНКОВО хулине, ЧАПЛИНО хулипе питех те паха чугун çул узелне йышăнса илчĕç. Паянах Кăнтăр фрончĕн войскисем, хăвăрт пырса çапса, Приазовьери чугун çулсен питех те паха узелне —ВОЛНОВАХА хулине тытса илчĕç тата, Азов тинĕс çыранĕ тăрăх тапăнса пырса, Кăнтăрти металлурги промышленноçĕн пысăк центрне—МАРИУПОЛЬ хулипе портне нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларчĕç.

Çак çĕнĕ çитĕнĕве Кăнтăрта пирĕн войскăсем нимĕç çарĕсен тылне шăтарса кĕрсе кайнă утлă çар соединенийĕсемпе механизированнăй соединенисен хăюллă маневрне пула турнă.

Мариуполь, Барвенково, Волноваха тата **Чаплино** хулисемшĕн пынă çапăçусенче **Селиванов** генерал-майорăн Донри казакĕсем-кавалерисчĕсем, танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕн **Пушкинăн** тата танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕн **Руссияновăн** танкисчĕсем, **Чуйков** генерал-лейтенантăн, **Лелюшенко** генерал-лейтенантăн, **Хоменко** генерал-лейтенантăн войскисем, авиаци генерал-лейтенанчĕн **Судецăн**, авиаци генерал-лейтенанчĕн **Хрюкинăн**, авиаци генерал-майорĕн **Тупиковăн** летчикĕсем, **Горшков** контр-адмиралăн морякĕсем, **Мариуполь** хулинчен хĕвеланăçнерехре десант антарнăскерсем, паларнă.

Уйрăмах çаксем паларнă:

Сланов полковникăн Донри 11-мĕш гвардейски кавалери дивизийĕ, **Сычев** полковникăн 130-мĕш Таганрогски стрелковăй дивизийĕ, **Блажевич** полковникăн 221-мĕш стрелковăй дивизийĕ, **Цаликов** генерал-майорăн 3-мĕш гвардейски стрелковăй дивизийĕ, **Лещинин** полковникăн 39-мĕш гвардейски стрелковăй дивизийĕ, **Дзусов** полковникăн 9-мĕш гвардейски истребительнăй авиаци дивизийĕ, **Сафронов** полковникăн 5-мĕш гвардейски механизированнăй бригади, **Артеменко** полковникăн 6-мĕш гвардейски механизированнăй бригади, **Жаров** подполковникăн 12-мĕш мотострелковăй бригади, **Девятко** подполковникăн 3-мĕш танковăй бригади, **Беспалов** подполковникăн 39-мĕш танковăй бригади, танковăй войскăсен генерал-майорĕн **Бурдовăн 31-мĕш** гвардейски танковăй уйрăм бригади, **Шевченко** полковникăн 65-мĕш танковăй бригади, **Гурин** подполковникăн хăй тĕллĕн çӳрекен çăмăл тупăсен 1890-мĕш уйрăм полкĕ, **Нестеров** капитанăн 217-мĕш танковăй уйрăм батальонĕ.

Тунă çĕнтерĕве палăртас майпа, **Мариуполь, Волноваха, Чаплино,** Барвенково хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче паларнă соединенисемпе чаçсене çакăн пек ят парас:

„**Мариупольски**“:
221-мĕш стрелковăй дивизие,
9-мĕш гвардейски истребительнăй авиаци дивизине,
„**Волновахски**“:
Донри 11-мĕш гвардейски кавалери дивизине,
3-мĕш гвардейски стрелковăй дивизие,
5-мĕш гвардейски механизированнăй бригадăна,
6-мĕш гвардейски механизированнăй бригадăна,
12-мĕш мотострелковăй бригадăна,
65-мĕш танковăй бригадăна,
„**Чаплински**“:
3-мĕш танковăй бригадăна,
39-мĕш танковăй бригадăна,
„**Барвенковски**“:
39-мĕш гвардейски стрелковăй дивизие,
31-мĕш гвардейски танковăй уйрăм бригадăна,
Хăй тĕллĕн çӳрекен çăмăл тупăсен 1890-мĕш уйрăм полкне,
517-мĕш танковăй уйрăм батальона.

Малашне çак соединенисемпе чаçсене çапла чĕнмелле тăвас:
221-мĕш Мариупольски стрелковăй дивизи,
9-мĕш гвардейски Мариупольски истребительнăй авиаци дивизийĕ.
Донри 11-мĕш гвардейски Волновахски кавалери дивизийĕ,
3-мĕш гвардейски Волновахски стрелковăй дивизи,
5-мĕш гвардейски Волновахски механизированнăй бригада,
6-мĕш гвардейски механизированнăй бригада,
12-мĕш Волновахски мотострелковăй бригада,
65-мĕш Волновахски танковăй бригада,
3-мĕш Чаплински танковăй бригада,
39-мĕш Чаплински танковăй бригада,
39-мĕш гвардейски Барвенковски стрелковăй дивизи,
31-мĕш гвардейски Барвенковски танковăй уйрăм бригада,
Хăй тĕллĕн çӳрекен çăмăл тупăсен 1890-мĕш Барвенковски уйрăм полкĕ,
517-мĕш Барвенковски танковăй уйрăм батальон.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче иккĕмĕш хут паларнă 130-мĕш Таганрогски стрелковăй дивизие Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян сентябрĕн 10-мĕшĕнче 20 сехетре пирĕн Тăван çĕршывăн столици **Мускав Мариуполь, Волноваха, Чаплино** тата **Барвенково** хулисене ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр войскăсене çĕр çирĕм тăватă тупăран вуникĕ хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур войскăсене, **Мариуполь, Волноваха, Чаплино** тата **Барвенково** хулисемшĕн çапăçнăскерсене, **тав тăватăп.**

Пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре пуçĕсене хунă геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 9-МĔÇĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче НЕЖИН хули енче пирĕн çарсем хаяр çапăçусенче тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та БАХМАЧ хулипе пысăк чугун çул узелне йышăнса илнĕ.

СТАЛИНО хулинчен (Донбасс) хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 180 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра Сталино облаçĕнчи ДОБРОПОЛЬЕ тата КИВĔ БЕШЕВО ятлă район центрĕсене, ВЕРНО ПОЛЬЕ, ÇĔНĔ ДМИТРОВКА, ПРИВОЛЬЕ, ПЕТРОВКА, ÇĔНĔ ПАВЛОВКА, АЛЕКСАНДРОВКА, ÇĔНĔ БЕРЕЗОВКА, СЕРГЕЕВКА, ÇĔНĔ ПОДГОРОДНЕЕ, МУРАВЬЕВКА, КРАСНОЕ, ПЕТРОВСКИЙ, АНДРЕЕВКА, АСЛĂ КАРАКУБА, КИВĔ ИГНАТЬЕВКА, КИВĔ КАРАНЬ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата ЧЕРКАССКАЯ, БАНТИШЕВО, ГУСАРОВКА, ДОБРОПОЛЬЕ, УДАЧНАЯ, СОЛЕНАЯ, ПУКУРИХА, МАНДРЫКИНО, ДОЛЯ, КАРАВАННАЯ, ЛАРИНО, МЕНЬЧУГОВО ятлă чугун çул станцийĕсене илнĕ.

ПРИЛУКИ хули енче пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пынă. 8 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 80 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра Сумы районĕнчи СМЕЛОЕ, НЕДРИГАЙЛОВ, ОГНЕВКА ятлă район центрĕсене тата ШПОТОВКА, КУРМАНЫ, САКУНИХА, СЕМЯНОВКА, КАПУСТИНЦЫ, ПОДСТАВКИ, АСЛĂ БУДИЩЕ, ПЛЕШИВЕЦ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене илнĕ.

БРЯНСК хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, 6 километртан пуçласа 12 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра МАСЕЕВКА, ЛБЫ, ОЗЕРО, АНДРЕЕВСКИ ХУТОР, АЛЕШКИНА, ЗЕЛЕПУГОВКА, БОРКИ, САЛТАНОВКА ятлă халăх пурăнакан пунктсем пур.

БРЯНСК хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем ЛЮДИНОВО хулине йышăнса илнĕ.

ХАРЬКОВРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем малалла тапăнса çапăçнă, çав çапăçусенче хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

СМОЛЕНСК енче пирĕн çарсем хăйсем йышăнса тăракан позицисене лайăхлатасшăн çапăçнă.

Сентябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 27 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 30 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Нежин хули енче пирĕн çарсем хаяр çапăçусем хыççăн Бахмач хулине штурмласа йышăнса илнĕ. Хула патне пымалли вырăнсенче тата хулинче хăйĕнче те икĕ кун хушши хаяр çапăçусем пынă. Нимĕçсем, мĕнпур вăйпа çапăçса, çак питех те кирлĕ чугун çул узелне хăйсен аллинчех тытса хăварма хăтланнă. Вĕсем хăйсен танкĕсемпе пехотине татти-сыпписĕр контратакăна кĕрте-кĕрте янă. Пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Бахмач хулине хӳтĕлекен укрепленисене йышăнса илнĕ те хулана вăркăнса кĕрсе кайнă. Урамри çапăçусенче уйрăм кварталсем темиçе хутчен те алăран алла куçнă, анчах та совет çарĕсем нимĕçсене аркатса тăкса çиеле тухнă. Бахмач хулипе пысăк чугун çул узелне нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Вĕсен хушшинче складсем, танксем, хĕçпăшал тата тĕрлĕрен çар пурлăхĕ нумай.

* * *

Пирĕн Сталино хулине ирĕке кăларнă çарсем, аркатса тăкнă тăшмана хыççăнах хăваласа пырса, халăх пурăнакан 180 пункта ытла, вăл шутра Доброполье тата Кивĕ Бешево ятлă район центрĕсене, йышăнса илнĕ. Сталин хулинчен хĕвеланăçнерехре пулса иртнĕ çапăçусенче кун каçиччен 1.500 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Тăшманăн техникипе çар материалĕсене нумай пĕтерсе тăкнă е тытса илнĕ. Пĕр соединени чаçĕсем Красноармейское хулине йышăнса илнĕ хыççăн çаплах малалла тапăнса пынă, тăшмана хушăри рубежсем çинче чарăнса тăма паман.

Пирĕн авиаци нимĕçсем каялла чакакан çулсене штурмланă, вĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Совет летчикĕсем 18 паровоз, 11 çар эшелонĕ, 80 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ тата чугун çул çинчи темиçе кĕпере сирпĕнтерсе янă. Сывлăшри çапăçусенче кун каçиччен нимĕçсен 10 самолетне персе ӳкернĕ тата, унсăр пуçне, пĕр аэродромра тăшманăн 20 самолетне ытла çĕмĕрсе тăкнă е çунтарса янă.

* * *

Брянск хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пынă. Нагля хулинчен çурçĕртерехри пĕр соединени боецĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче 600 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 32 тупă, 15 миномет, 110 пулемет, тĕрлĕ грузсем тиенĕ 33 вагон тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн разведка тăвакан отрядсем тăшман тылне кĕрсе кайнă. Сасартăк пырса çапса, разведчиксем нимĕçсен автоколоннине аркатса тăкнă, 3 танк, 50 автомашина пĕтерсе тăкнă.

Брянск хулинчен çурçĕртерехре, тăшманăн позицийĕсене артиллери хăватлăн персе çĕмĕрнĕ хыççăн, пирĕн çарсем нимĕçсене атакăланă. Пирĕн боецсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та, çурçĕр тата кăнтăр енчен хăварттăн пырса çапса, Людиново хулине йышăнса илнĕ. Хулашăн пынă çапăçура 1200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. 300 нимĕçе тыткăна илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пĕр чаçри снайперсем икĕ кун хушшинче 100 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Совет летчикĕсем фронт линийĕ умĕнче тăшман самолетне персе ӳкернĕ. Пĕр сехет иртсен, нимĕçсем хăйсен персе ӳкернĕ самолечĕн экипажне шырама «Физелер—156» йышши самолетне янă. Шахманов сержантăн тупă расчечĕ, тĕл персе, нимĕçсен çак самолетне те ӳкернĕ. Самолет çинчи икĕ летчика тыткăна илнĕ. Кăшт вăхăт иртсен, çав тĕлех нимĕçсен «Фокке-Вульф—190» йышши икĕ истребителĕ пырса тухнă. Вĕсем хăйсен персе ӳкернĕ самолечĕсем тĕлĕнче явăнма пуçланă. Пирĕн зенитчиксем вĕсене пеме тытăннă. Вара Воробьев сержантăн тата Дорохов кĕçĕн сержантăн расчечĕсем тăшманăн çак икĕ истребительне те персе ӳкернĕ. Çапла ĕнтĕ, çак участокра кун каçиччен мĕн пурĕ 4 самолета персе ӳкернĕ.

* * *

Чернигов облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ августăн 28-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 3-мĕшне çитиччен тăшманăн чугун çулпа пыракан 12 эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 9 паровоз тата 100 вагон ытла çĕмĕрĕлнĕ. Партизансем пĕр километр тăршшĕ чугун çул линине сирпĕнтерсе янă, икĕ кĕпере çунтарса янă. Çавна пула чугун çулăн çав участокĕнче поездсем çӳреме чарăннă. Партизансен «За Родину» ятлă тата Молотов ячĕпе тăракан отрячĕсем 110 мадьяра пĕтерсе тăкнă, тăшманăн боеприпассем тата çар пурлăхĕ усракан склачĕсене вут тивертсе хăварнă.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Германи каторгине Славянск хулинче пурăнакан нумай çынна хăваласа кайнă. Икĕ хĕр—Анна Чекашевăпа Евдокия Потапова—фашистла тыткăнран тарса таврăннă. Вĕсем çапла каласа кăтартнă: «Пире иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче Берлина хăваласа кайрĕç, вара унта Шенвальдер урамĕнчи 46-мĕш лагере вырнаçтарчĕç. Ку лагерьте 700 совет гражданĕ асапланса пурăннă. Пире сивĕ бараксене хăваласа кĕртрĕç те икĕ хутлă саксем çинче выртан кăтартса пачĕç, вара завода конвойпа хăваласа кайрĕç. Талăкра 14 сехетшер ĕçлеттеретчĕç. Баракра та, заводра та пирĕнтен мăшкăлласа кулатчĕç. Пире мастерсем те, полицейскисем те хĕнетчĕç. Час-часах карцера хупса кунсерен 80 грамм çăкăр та пĕр курка шыв кăна паратчĕç. Эпир пурте выçă пурăнаттăмăр. Нумайĕшĕ выçăпа тата хĕненине чăтаймасăр вилчĕç. Кашни баракрах выçăпа шыçса кайнă тата сывмарланнă хĕрсемпе каччăсем темиçе вунă çынна çитиччĕнех шутланатчĕç. Вĕсем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçма та пултараймастчĕç. Пирĕн лагерьте пĕр питĕ хăюллă Маруся ятлă хĕр пурччĕ. Вăл пире каторгăллă тата выçăпа пĕтерекен йĕркене хирĕç тăма чĕнетчĕ. Кăшт вăхăт иртсен, Марусьăна лагерьтен илсе кайрĕç. Гитлерла çынçиенсем ăна çакса вĕлернĕ.

Çакăн хыççăн часах баракран йывăр сывмарланнисене тата ĕçлеме пултарайманнисене пурне те илсе кайрĕç. Нимĕçсем—вĕсене каялла тăван çĕршыва янă, тесе сăмах сарчĕç. Анчах та кайран çакă паллă пулса тăчĕ: нимĕçсем вĕсене пурне те вĕлернĕ».

СССР орденĕсене пани

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче СССР Верховный Совечĕн депутачĕн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх наградăланă юлташсене орденсем пачĕ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарьне И. М. Чарыков юлташа Ленин орденĕ пачĕç. Орден илсе, Чарыков юлташ çав пысăк наградăшăн партипе правительствăна хĕрӳллĕн тав туса сăмах каларĕ.

— Мана коммунистсен партийĕ вĕрентсе ӳстерчĕ,—тет Чарыков юлташ,—çавăнпа та çак пысăк наградăшăн эпĕ чи малтан, ăна тав тăватăп.

Правительствăн çак пысăк наградине тивĕçлĕ пулас тесе, эпĕ хамăн мĕнпур вăйпа пĕлĕве хурса ĕçлĕп.

Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ С. Е. Белолипецкий юлташ «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ илчĕ. ВЛКСМ Обкомĕн секретарьне П. М. Михайлов юлташа «Знак Почета» орденĕ пачĕç.

Белолипецкий тата Михайлов юлташсем пысăк наградăшăн Совет Правительствине, Сталин юлташа тав турĕç.

Орденсем панă хыççăн З. А. Андреева юлташ кĕске сăмах каларĕ. Вăл награда илнĕ юлташсене саламларĕ тата малашнехри ĕçре çĕнĕ ӳсĕмсем тума ырлăх сунчĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене— ăшă тумтирсем

КАЛИНИНО. Районри колхозниксемпе колхозницăсем боецсем валли 10 мăшăр алшиш, 77 мăшăр носки, 16 сăмса тутри, 10 алшăлли хатĕрлесе пачĕç. Тата ăшă тумтирсемпе япаласем тума 80 тир, 40 килограмм çăм пухнă.

Боецсене ăшă тумтирсемпе япаласем туса парассишĕн Çĕнкасри «Комсомолец» колхозри колхозниксем уйрăмах тимлĕн тăрăшаççĕ. Çак иртнĕ кунсенче кунти колхозницăсем боецсем валли 12 мăшăр алшиш, 4 мăшăр носки, 5 мăшăр чулха çыхса панă. «Знамя труда» колхоз членĕсем 36 тир, икĕ çĕлĕк, 6 мăшăр алшиш, 4 метр пир панă.

Б. ШОРНИКОВ.

Воскреснике хатĕрленетпĕр

ИШЛЕЙ, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (**Телефонпа**). ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ сентябрĕн 12-мĕшĕнче вырсарникун государствăна тырă парас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен воскресникне ирттерме йышăнчĕ.

Ĕнер ВЛКСМ райкомĕн бюровĕнче эпир çак ыйтăва сӳтсе-яврăмăр. Воскресник ирттерес ĕçре колхозсенчи пуçламĕш организацисене пулăшма райцентрти комсомол активĕ, пурĕ 31 çын, ялсене тухса кайрĕ.

Сентябрĕн 12-мĕшĕнче государствăна тырă нумайрах парас тесе, колхозниксем халĕ кунĕн-çĕрĕн аван çапма тытăнчĕç. Хĕрлĕ обозсемпе ăсатма Мижер ялсоветĕнче 50 лавлăх, Шетмĕ Пуç ялсоветĕнче 18 лавлăх, Салабайкасси ялсоветĕнче 40 лавлăх, Катрас ялсоветĕнче 23 лавлăх тырă хатĕрленĕ. Воскресник кунĕнче хатĕрлев пунктне пĕтĕмпе 1000 лавран кая мар тĕштырă леçме шутлатпăр.

К. СЕРЕБРЯКОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Тракторсемпе тата комбайнсемпе лайăх усă куракан трактористсене, комбайнерсене, тракторнăй бригадăсен бригадирĕсене, МТС механикĕсене ĕçре хавхалантарасси

ССР Союзĕн Совнаркомĕ 1943 çулхи августăн 11-мĕшĕнче кăларнă постановленипе килĕштерсе, Чăваш АССР Совнаркомĕ тракторсемпе тата комбайнсемпе лайăх усă куракан трактористсене, комбайнерсене, тракторнăй бригадăсен бригадирĕсене, МТС механикĕсене ĕçре хавхалантарасси çинчен постановлени йышăннă. Çак постановлени тăрăх, трактора техника тĕлĕшĕнчен пĕр çул хушши лайăх тытса усранă тата çав вăхăтра хăйĕн сезонри нормине тултарнă трактористсене — старши тракториста 1500 тенкĕ, сменнăй трактористa 1200 тенкĕ преми памалла. Икĕ çул хушши çавăн пек ĕçлесе пынă трактористсене — старши трактористa 2500 тенкĕ, сменнăй трактористa 2000 тенкĕ, виçĕ çул хушши çавăн пек ĕçленĕ трактористсене—старши трактористa 3500 тенкĕ, сменăри трактористa 3000 тенкĕ премия памалла. СТЗ—НАТИ тата ЧТЗ тракторсемпе ĕçлекен трактористсене премия укçине çӳлте кăтартнă хисепрен 10 процент, ХТЗ—Т2Г тата ЧТЗ—СГ—65 тракторсемпе ĕçлекен трактористсене 15 процент ӳстерсе памалла.

Комбайнсене техника тĕлĕшĕнчен çулталăк хушши лайăх пăхса усранă тата çав вăхăтра сезонри нормăна тултарнă комбайнерсене 1.500 тенкĕ парса премилемелле. Икĕ çул хушши çавăн пек ĕçленĕ комбайнерсене 2.500 тенкĕ тата виçĕ çулшăн 3.500 тенкĕ памалла.

Бригадăсенчи тракторсене техника тĕлĕшĕнчен пĕр çулталăк хушши лайăх пăхса усранă тата сезонри плана тултарса ĕçленĕ бригадăсен бригадирĕсене 2000 тенкĕ, çавăн пек икĕ çул ĕçленĕшĕн 3.500 тенкĕ премия памалла.

Хăйсем пăхса усракан тракторсене техника тĕлĕшĕнчен пĕр çул хушши лайăх пăхса усранă тата тракторсемпе тумалли ĕçсен планне тултарнă МТС механикĕсене 2500 тенкĕ, старши механиксене 4000 тенкĕ памалла. Çавăн пек икĕ çул хушши тăтăшах лайăх ĕçлесе пынăшăн МТС механикĕсене 3.500 тата старши механиксене 5000 тенкĕ памалла.

Премия укçине ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесен, тракторсемпе комбайнсене СССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çирĕплетнĕ сроксенче çĕç юсамалла пулсан параççĕ.

Комбайнерсене премия укçине сезонри нормăна тултарнă хыççăн, лайăх пахалăхпа 25 кунран кая мар ĕçленисене параççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ Çĕрĕç Халăх Комиссарне Малов юлташа çак постановленипе пăхнă премисене тата «Лучший тракторист МТС», «Лучший комбайнер МТС», «Отличный бригадир тракторной бригады МТС», «Отличный механик МТС» значоксене илме тивĕçлĕ трактористсене, комбайнерсене, тракторнăй бригадăсен бригадирĕсене, МТС механикĕсене ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатне тăратма хушса хăварнă.

Пахчасем тытакан рабочисемпе служащисем валли катка-пичкесем юсас ĕçе организацилесси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ пахчасем тытакан рабочисемпе служащисем валли пахча-çимĕçсем тăварласа йӳçĕтме катка-пичкесем юсас ĕçе организацилемелли плана çирĕплетнĕ. Ку план тăрăх 1943 çулхи сентябрьпе октябрь уйăхĕсенче катка-пичкесем Наркомместпром предприятийĕсен 7500 тенкĕлĕх, промкоопераци артелĕсен 10.000 тенкĕлĕх юсамалла. Шупашкар хулинче катка-пичкесем юсакан мастерскойсем Чăвашпромсоюз системине кĕрекен «Кооператор», Древпромсоюз системине кĕрекен «Красный мебельщик» артельсенче организацилемелле. Мастерскойсене сентябрĕн 10-мĕшĕччен ĕçе кĕртмелле.

Совнарком Чăваш АССР сутуилĕ Халăх Комиссарне Ларионов юлташа хуласемпе рабочи поселоксене сентябрьпе октябрь уйăхĕсенче рабочисемпе служащисене сутма çитерелĕклĕ чухлĕ катка-пичкесем илсе пыма хушнă.

Кунсăр пуçне Совнарком предприятисен директорĕсене ширпотреб цехĕсемпе подсобнăй хуçалăхĕсенче катка-пичкесем тăвакан тата юсакан производствăсем организацилеме, пахчасем тытакан рабочисемпе служащисене овощехранилищĕсем (нӳхрепсем, подвалсем) тăвас тĕлĕшпе пулăшу пама хушнă.



Ÿкерчĕк çинче: Шупашкар районĕнчи Мăн Карачура ялĕнчи колхозра пахча-çимĕç усрамалли подвал тăваççĕ.
Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Хĕрсех авăн çапаççĕ

ШĂХАСАН. Ямпахри „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз кăçалхи ялхуçалăх ĕçсене кăтартуллă туса пынăшăн районри Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕ. Августăн 23-мĕшĕ тĕлне колхоз тĕштырăсемпе парçа-ясмăксене пурне те вырса пĕтерчĕ, 1943 çулхи тухăçран государствăна тырă парса татрĕ тата 64 центнер çĕрулми пачĕ. „Майăн 1-мĕшĕ" колхозра авăн çапас ĕç хĕрÿллĕн пырать.

Ĕçсем çапла ăнăçлăн пулса пыни пĕтĕмпех ĕçре тĕрĕс организациленине пĕлнинчен килнĕ. Уйри ĕçсем пуçланиччен кунта çирĕп план-график туса хатĕрленĕ, çав план-графикра хăш бригадăн, кашни уйрăм колхозникĕн ăçта, хăçан тата мĕн тумаллине палăртса хунă, уй çинчен колхозниксене малтанах тĕплĕн ăнлантарса панă. Çакна пула ĕнтĕ уйри ĕçсем хĕрсе пынă вăхăтра нимĕнле чăрмавсем те пулмарĕç. Ĕç хатĕрĕсене те малтанах тĕплĕн хатĕрлесе çитерни планпа палăртнă ĕçсене вăхăтра, ăнăçлăн туса пыма май пачĕ.

Тырă вырнă вăхăтра агитаторсем те лайăх ĕçлерĕç. Учительница П. Емельянова юлташ кашни кунах ĕçлекенсем патне тухса хаçат-журналсем вуласа пачĕ, Сталин юлташăн приказĕсемпе тĕплĕн паллаштарчĕ.

Колхоз председателĕ П. Александров, ВКП(б) членĕ, хăй те агитатор пулса ĕçлет. Колхозниксем хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçĕсене туса панипе пĕрлех, вăл кашни кун тенĕ пекех, жнейкăпа хăй тырă вырчĕ, кулленех нормăна 150—200 процент таран тултарса пычĕ, хăй примерĕпе колхозниксене хавхалантарчĕ.

Колхозниксем пурте иртен пуçласа каç пуличченех уйрех ĕçлерĕç. Стахановецсем йышĕ кулленех ÿссе пычĕ. 59 çулхи старик Никифор Литров колхозăн пур тĕрлĕ ĕçĕсене те активлăн хутшăнать. Вăл тырă вырчĕ, çĕмелесем, капансем турĕ, жнейка кĕреплисене туса пачĕ. Кăçал Никифор Литров 185 ĕçкунĕ тунă, ялхуçалăх çулĕ вĕçленичченех тата 100 ĕçкуне тума пĕтĕм вăй хурса ĕçлет. Çавăн пекех Алексеев Емельян та, хăй ватă пулнине пăхмасăрах, колхоз валли вĕренсем явса пысăк усă кÿчĕ.

Хĕрарăмсем те колхозра тăрăшса ĕçлеççĕ. Орденлă Клементьева Пелагея çапла авăн çапнă çĕрте хĕрÿллĕн ĕçлет.

— Ман упăшкам Георгий аслă вăрçă фронтĕнче нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн çапăçса пурнĕ хуче. Эпĕ хамăрăн колхозри ĕçсене мĕн пур вăя хурса ĕçлесе хамăн юратнă упăшкăшăн çав усал тăшмансене хаярлăн тавăрма тăрăшатăп, — тет вăл.

С. АСЛАН,
В. ВЕСЕЛОВ.

Государствăна тырă парса татнă

КАЛИНИНО, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсене уборка ĕçĕсене тата государствăна тырă парассине хăвăртлатса [illegible]. Тÿсĕй Мăрарти «Клевер» колхоз тырă ĕçĕсене [illegible] капана хывса пĕтерчĕ, государствăна тырă парса татрĕ. Уборка ĕçĕнче П. Александров юлташăн бригади пĕрмаях малти ретре пычĕ.

Шуркассинчи «Социализм» колхоз та государство умĕнчи обязательствисене пĕтĕмпех пурнăçа кертнĕ. Вăл 178 центнер тырă, 17 центнер купăста, 3 центнер хăяр, 3 центнер кишĕр тата çĕрулми панă. Çак кунсенче колхоз государствăна техникăллă культурăсене парса татнă. Ку таранччен 10 центнер тырă, 2 центнер кантăр пуçн панă.

Б. ШОРНИКОВ.

Эпир панă укçа нимĕççене пĕтерме каять

Йĕпреç ялсоветне кĕрекен колхозсенче ялхуçалăх налог укçине пĕлтерÿсем салатса панă хыççăнах тÿлеме тытăнчĕç. "Карл Маркс" колхозра налог укçи 19 пин тенкĕ пухмалла пулнă, колхозниксемпе колхозницăсем ăна пĕр кун хушшинчех тÿлесе татрĕç. Çавăн пекех „Костер" колхозри колхозниксемпе колхозницăсем те налог укçине çийĕнчех тÿлерĕç. Ватă колхозник Левцев юлташ: «Ку укçа нимĕçсене пĕтермелли хĕçпăшалсем тума кирлĕ, кĕçъере тытмалла мар ăна",— терĕ те налог укçине пĕтĕмпех тÿлесе татрĕ.

Ялсоветри колхозсемпе единоличниксем хушшинче налог укçине кĕске вăхăтрах 80 пин тенкĕ пухнă.

Д. ВАСИЛЬЕВ,
Йĕпреç районĕнчи Йĕпреç ялсовечĕн председателĕ.

БДО—34 молотилкăпа кунне икĕ норма

ВĂРНАР. Украинăн иккĕмĕш столицине—Харькова нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă çарсене Сталин юлташ панă приказа августăн 24-мĕшĕнче пирĕн Уравăш ялĕнче 217 çын итлерĕ. Çулпуç приказне итлени хыççăн [illegible] колхозниксем [illegible] ĕçсене [illegible]. 190 колхозник, вăл шутра ваттисемпе çамрăксем те, кашни кун вăй хурса ĕçлерĕç. Вара августăн 27-мĕшĕ тĕлне пирĕн колхоз уйхирти пĕтĕм тырра вырса пухрĕ, тата икĕ кунран кĕрхи культурăсене те акса пĕтерчĕ.

Халĕ уйран кĕлте кÿрсе авăн çапас ĕç вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче Хĕрлĕ Çар пысăк çĕнтерÿ туса пыни халăхăн ĕçлес вăй-хăватне питĕ хытă ÿстерсе ячĕ. Çулпуç Сталинăн кашни приказне агитаторсем колхозниксем патне хăвăрт çитереççĕ ăнлантарса вуласа пăраççĕ.

Судков юлташ ертсе пыракан 4-мĕш бригада авăн çапнă çĕрте пысăк пултарулăх кăтартать. БДО—34 маркăллă молотилкăпа сменăра 157 центнер тырă çапса кăларать. Молотилка мĕн таран ĕçлеме пултарнипе пĕтĕмĕшпех усă кураççĕ. Икĕ сменăпа ĕçлеççĕ.

Хăватлă танксемпе самолетсем оборона завочĕсен конвеерĕсем çинчен епле анаççĕ, çавăн пекех пирĕн итемсем çинчен те тырă тултарнă шурă михĕсем лавсем çине тиенеççĕ. Государствăна тырă памашкăн транспорт бригади Заготзерно пунктне кулленех иккĕ хутлать.

Пирĕн колхозниксем сивĕ кĕр çитиччен авăн çапса пĕтересшĕн. Кашни çавăншăн тăрăшать. Колхозница Вера Алтяхова тырă сăвăрать (алăпа сăвăрать вăл). Талăкра 21 центнер сăвăрас вырăнне вăл 120—140-шер центнер сăвăрса тасатать. Виçĕ талăк хушшинче Вера Алтяхова юлташ 28 ĕçкунĕ ĕçлесе турĕ.

ЯКИМОВА,
„Майăн 1-мĕшĕ" колхозри ВКП(б) кандидачĕсен группин руководителĕ

Вăкăрсемпе кĕлте кÿреççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). «Красный Октябрь» колхозра (председателĕ Акчурин юлташ) кĕлтесене капана хывса пĕтерчĕ. Çак ĕçре колхоз вăкăрсемпе ăнăçлăн усă курчĕ. Комсомолец М. Орешин пĕр вăкăрпа талăкра пĕрер гектар çинчи кĕлтесене турттарса пычĕ. Нормăпа кунне 7-шер урапа турттармалла пулсан, вăл 12—15-шер урапа турттарчĕ.

В. А.

Хĕрарăмсен бригади вăрман хатĕрлевĕнче стахановла ĕçлет

Иртнĕ çулта Етĕрнери спирт завоĕнче йывăç хатĕрлеме ятарласа бригада организациленĕччĕ. Бригадăна Евдокия Корева юлташ ертсе пырать, унта пурте хĕрарăмсем. Бригада часах лайăх ĕçлеме пуçларĕ, плана уйăхран уйăха тултарса пычĕ.

Кăçал бригадăри хĕрарăмсем, Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, тата лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем плана июль уйăхĕнче 120 процент, август уйăхĕнче 130 процент тултарчĕç. Халĕ А. Романова, П. Ершова, Е. Миронова, А. Корева юлташсем куллен виçшер кубла метр вутă хатĕрлеççĕ. Ку вăл плана 150 процент тултарни пулать.

Хĕрарăмсен бригади çулталăкри плана 160 процент тултарма сăмах пачĕ.

А. КРАСНОВ.

Çулталăкри плана тултарнă

ИШЛЕЙ. Мамăшри промартель [illegible] вăхăт хушши [illegible] производство планне тултарайман. Пĕр уйăх каярах артель председателĕ пулса ĕçлеме фронтран [illegible] тăварăнна Иванов юлташа суйларĕç. Вăл малтанах, актив çине тайăнса, артель членĕсем хушшинче массăллă ĕçе йĕркелерĕ, производствăна организацилеме пулăшрĕ. Çакăн пулăшнипе артель членĕсем ĕçри активлăхĕ ÿсленчĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем ĕçе виçĕ норма тултарса ĕçлеме тытăнчĕç.

Халĕ артель малта пыракансенчен пĕри пулса тăрать. Сентябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне вăл çулталăкри плана 110 процент тултарчĕ. Артель коллективĕ плана тултарнипе çапланса лармасть, çулталăк вĕçлениччен тата ытларах продукци туса кăларассишĕн кĕрешет.

П. РЫКОВ.

Махорка фабрикин ÿсĕмĕ

Шупашкарти махорка фабрикин коллективĕ çулталăк пуçланнăранпах производство планне уйăхран уйăха иртерсе тултарать. Август уйăхĕнче Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланнă рабочисем çĕнĕ ÿсĕм турĕç. Вĕсем уйăхри плана 200 процент тултарнă. Çапла сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне фабрика коллективĕ çулталăкри планран иртерсе 9 тонна махорка туса кăларнă. Продукци хакне те чылай йÿнетнĕ. Иртнĕ çулта пĕр килограмм махорка 3 тенкĕ те 93 пуса ларнă пулсан, кăçал вара унăн хакĕ 2 тенкĕ те 99 пус кăна. Чĕртавара 3 тонна перекетленĕ.

Производствăра Овчинникова, Каргина юлташсен бригадисем паха тĕслĕхсем кăтартнă. Август уйăхĕнче ĕç нормине 15—20 процент таран ÿстернĕ пулин те вĕсем ăна чылай иртерсе тултарнă. Махорка туранă çĕрте ĕçлекенсем Семенцова тата Маркина юлташсем кашни уйăхрах нормăна 150-шар процент таран тултарса пынă.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине хакламаççĕ

Советски районри промышленность предприятисемпе промартельсенчен нумайĕшĕ производство планне иртерсе тултараççĕ. Çичĕ уйăхри плана, сăмахран, райпромкомбинат 120,3 процент, «Трудовик» артель 125 процент тултарнă. Турайри артель те хăйĕн планне пурнăçа кĕртнĕ. Пăхсан вăл предприятисемпе артельсем лайăх ĕçленĕ пек туйăнать. Анчах ĕçсене тĕплĕн тишкерсе тухсан, урăхла фактсем куратпăр. Артельсем хуçалăхра кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Райпромкомбинатăн черепица, шĕвĕ супăнь, урапа маçĕ туса кăлармалла, анчах вăл çав япаласене пĕртте туман. «Трудовик» артель тимĕртăмăрсенчен хуçалăхра кирлĕ япаласем тăвас плана, Турайри артель çăматăсем, каткасем тăвас, атă-пушмаксем юсас плана тултарман. Предприятисемпе артельсен руководителĕсен плана çăмăлтарах ĕçсене тунипе мар, кирлĕ таварсем кăларнипе тултармалла.

М. СТЕПАНОВА,
Н. ИЛЬИН.

Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисене пулăшма

ЭЛЕК, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем çĕнтерÿсем тăвакан Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисене пулăшма çăм 317 килограмм, çу 315 килограмм, 25 центнер çăнăх тата 20 пин тенкĕ укçа пухма пулнă. Нумай колхозсем илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртрĕç. «Труд» колхоз 3 килограмм çăм, 4 килограмм çу тата çăнăх панă.

Вăрçă инваличĕсене ĕçе вырнаçтарасси—ответлă ĕç

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче партипе правительство тата пĕтĕм совет халăхĕ, аслă çулпуç Сталин юлташ ертсе пынипе, Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе пысăк вăй хураççĕ.

Паттăр Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнипе пĕрлех тăван çĕршывшăн çапăçса аманнă вăрçă инваличĕсене пулăшса пырас ыйту та тĕп вырăнта тăрать. Вăрçă инваличĕсем государство паракан пенсисĕр пуçне тата нумай тĕрлĕ пулăшу илеççĕ. Кăçал çур çул хушшинче вăрçă инваличĕсене пенси 6.314.550 тенкĕ тÿленĕ. Кунсăр пуçне вĕсене государство 74.000 тенкĕ укçа, пулăшу кассинчен 20.000 центнер тырă панă тата тумтирсем илме пулăшнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, суту-илÿ организацийĕсем урлă вăрçă инваличĕсене 148 кĕрĕк-пиншак, 39 пин метр мануфактура, 500 мăшăр аялтан тăхăнмалли кĕпе йĕм, 210 мăшăр ботинка тата çăматăсем сутнă. Кунсăр пуçне Шупашкарта, Канашра тата ытти хуласемпе район центрĕсенче те инвалидсене столовăйсем çумне çирĕплетнĕ, çавăнтах вĕсене сĕт-çу, аш-какай тата ытти продуктсем те сутаççĕ. Çак ĕç уйрăмăнах Шупашкар, Улатăр хулисенче, Çĕрпÿ, Октябрьски, Елчĕк, Кувакино, Калинино районĕсенче лайăх пулса пырать.

Фронтран аманса таврăннă инвалидсенчен 73 процентне ĕçе вырнаçтарнă. Вĕсенчен чылайĕшĕсем колхоз председателĕсемпе бригадирсем, колхоз счетовочĕсем тата ялсовет председателĕсем пулса ĕçлеççĕ. Ĕçлеме пултарайман инвалидсем валли ятарласа икĕ çурт тунă. Унта 125 çын пурăнать. Çитес кунсенчех Калинино районĕнче 100 çын вырнаçмалăх тепĕр çурт туса пĕтереççĕ.

Вăрçă инваличĕсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе Улатăр (заведующийĕ Пеняева), Йĕпреç (заведующийĕ Фалеева), Калинино (заведующийĕ Любимов) райсобесĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Çав вăхăтрах уйрăм райсобессем çак ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанаççĕ. Сăмахран, Шăмăршă, Елчĕк, Шупашкар районĕсенчи тата Шупашкар хулинчи собессем начар ĕçлеççĕ. Вĕсем çак ĕçе тума инспекторсене хушнă. Инвалидсене ĕçе вырнаçтарасси—питех те ответлă ĕç. Чылайĕшĕсене пурăнмалли çуртсем, çие тăхăнмалли кĕпе-йĕмсем, атă-пушмаксем, тÿшек-çытарсем тата укçа парса пулăшмалла. Наркомсобес вĕсене хăй енчен укçа тата суту-илÿ организацийĕсем урлă мануфактурăсем илме пулăшать пулин те, ку вăл çителĕксĕр. Хуласенче пурăнакан вăрçă инваличĕсене столовăйсем çумне çирĕплетнĕ. Анчах та кунта апат-çимĕç пахалăхĕ питех те начар. Çитменнине тата час-часах çителĕклĕ таран çăкăр пулмасть. Наркомторгăн инвалидсем валли уйрăм ларексемпе магазинсем уçас пулать.

Тăван çĕршывшăн çапăçса аманнă инвалидсене тăванла пулăшса пырар.

П. МЕЦЕНАТОВА.
ЧАССР социальнăй обеспечени халăх комиссарĕ.

Вырăнти предприятисемпе учрежденисем валли вутă хатĕрлеççĕ

КАНАШ. (Хамăр корр). Хулари предприятисемпе учрежденисем кăçалхи хĕле лайăх хатĕрленсе кĕтсе илме тăрăшаççĕ. Çак ответлă ĕçе ВКП(б) хула комитечĕ оперативно ертсе пырать. ВКП(б) горкомĕ ку ыйтупа хулари предприятисемпе учрежденисен руководителĕсене пухса канашлу туса ирттернĕ. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе ертсе пыма ВКП(б) горкомĕн инструкторне Аккуратова юлташа уйăрса çирĕплетнĕ.

Июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа хулари 40 предприяти ытла вăрманта вутă хатĕрлеме тытăнчĕç. Вутă хатĕрлес ĕçре финтехникум, педучилище, 1-мĕшпе 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулсем, горпищекомбинат, Госбанк, «Красный воин» артель, пожарнăй команда тата пир-авăр фабрикин коллективĕсем аван ĕçленине палăртмалла.

Финтехникум коллективĕ (директорĕ Дондик юлташ) вĕренекен ачасемпе вăрмана кайса 300 кубометр вутă хатĕрлес вырăнне 515 кубометр хатĕрленĕ. Вутă хатĕрлес ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн 15 вĕренекене леспромхоз преми панă, вăл шутран Дондик юлташа 300 тенкĕ укçан премиленĕ. Иккĕмĕш номерлĕ вăтам шкул коллективĕ (директорĕ Иванова юлташ) 4 кун хушшинче вутă хатĕрлес плана ытлашшипех пурнăçланă. Будяк, Шурдова учительницăсем ку ĕçре хăйсем пример кăтартса ĕçленĕ.

Канаш леспромхозĕ уйăхри вутă хатĕрлес плана 102 процент тултарнă. Вăл Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата пĕрремĕш преми илме тивĕçлĕ пулчĕ. Хĕрлĕ ялав илнĕ ятпа леспромхозра ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăрту çĕнĕ çĕкленÿпе сарăлса кайрĕ. Вăрман касакансем вутă хатĕрлес плана сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне çĕр процентпех пурнăçлама обязательство илчĕç.

Ф. МАЛЫШКИН.

Ют çĕршывсенче

ИРАН ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇ ВĂРÇĂ ПУÇЛАНĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Иран Германие хирĕç вăрçă пуçланă тесе пĕлтерет.

Германи хаçачĕ пораженецсемпе тата „тĕрлĕ хыпарсем саракансемпе" кĕрешме чĕнет

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). „Дас шварце кор" ятлă гитлерла хаçат тĕрлĕ хыпарсем саракансем çинчен каллех çырать. Хаçат вĕсене „пысăк преступниксем тата раса тĕлĕшĕнчен çителĕклĕ мар çынсем" тесе чĕнет. Хăйне-хăй йăпатма тăрăшса, гитлерла хаçат çапла çырать: „Тĕрлĕ хыпарсем саракансем" халĕ ĕнтĕ „ытла нумаях мар", тет. Анчах та çак сăмаха вăл малалла çапла каласа хăех сирсе ярать: çав „хăрушă çынсемпе" государство хăй пĕччен хăйĕн полици аппарачĕпе кăна çителĕклĕ кĕрешме пултараймасть, ăна çав ĕçре халăхăн пулăшас пулать, тет. Анчах гитлеровецсене çав ĕçре пулăшмаççĕ. Гитлеровецсем хальхи вăхăтра обществăллă вырăнсене парти значокĕсемсĕр пыма юратаççĕ, тесе тарăхать хаçат. Пĕр вăхăтра çынсем хăйсене хăйсем нимĕçсем тесе çеç мар, национал-социалистсем тесе те чĕнетчĕç, халĕ ĕнтĕ вĕсем çав вăхăт çинчен аса илме юратмаççĕ. Ун чухне вĕсем парти значокне уççăнах çакса çÿретчĕç, халĕ мĕншĕн çавăн пек çакса çÿремелле мар?—тет вăл. „Анчах хальхи вăхăтра гитлеровецсем нумайĕшĕ хăйсен значокĕсене çакса çÿремеççĕ кăна мар, вĕсем тата хăйсем умĕнче тĕрлĕ суя хыпарсем сарма та ирĕк параççĕ", тесе хуйхăрать хаçат.

Хăйсене малашне таврăсси пирки гитлерла шайккăсен членĕсем те хăраса ÿкнине йышăнса, хаçат малалла çапла çырать: гитлерла пуçлăхсен ĕнтĕ пĕртен-пĕр май кăна тăрса юлать, вăл—террор. Хаçат „салхулăх, поражени тÿсес шухăш-кăмăлсем тата тĕрлĕ хыпарсем саракансене" пурне те хытă айăплама чĕнет.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Колхозран килнĕ çыру

2. ĂМĂРТУ ВĂЙ-ХĂВАЧĔ

Виçĕ сехет ирхине. Тĕттĕм-ха, анчах виççĕмĕш бригадăн бригадирĕ тахçанах ура çинче. Хăйĕн бригадинчи çынсене уйрăм участоксем тăрăх вырнаçтарса тухса, вăл колхоз правленине каять. Ĕнер колхоз председателĕ панă наряда татах та тепĕр хут пăхса тухса тĕрĕслетмелле.

— Питĕ ир килтĕр-çке эсир паян, Яковлева юлташ.

— Епле ир пулать вара, авă тул çутăлать те. Манăн колхозниксем ĕçе каяççĕ ĕнтĕ. Эпир ĕнер ĕçе мĕнле те пулин иртерех тухма шут турăмăр, ахаль ман бригада ыттисенчен юлса пырать. Пирĕн ĕçсем нумай вĕт-ха.

Çак калаçу вăл уборкăна тухса, бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăрту договорĕсем тунă хыççăнах пулса иртнĕ.

[illegible]

ĕçе вăл çине тăрса тытăннă, кашни колхозникпе колхозницăна нормăна тултарса пыракан тунă. Нумайĕшĕсем ĕç нормине пĕрре çурă е икĕ хут иртерсе пурнăçлаççĕ.

— Мана бригадира суйласан, эпĕ хам умма бригадăна мала кăларас задача лартрăм. Нумайĕшĕсем эпĕ çакна тума пултарассине шанмасчĕç. Анчах халĕ пурте хăйсен куçĕпе курса ĕненчĕç. Хам участоксенчи тырпула эпĕ вырса пĕтертĕм, государствăна тырă парса татрăм. Манăн бригада авăн çапас, кĕлте турттарса капана хывас ĕçсенче те кая юлмасть. Çакна ман бригада çапла пурнăçа кĕртме пултарчĕ. Уборкăн малтанхи кунĕнчех эпĕ колхозниксемпе калаçу туса иртертĕм. Пирĕн Хĕрлĕ Çар, фашистсене пĕр хĕрхенмесĕр аркатса пырса совет хули[illegible]

парса татма ыйтни çинчен каласа патăм. Колхозниксем мана тимлĕн итлерĕç.

Тепĕр калаçура эпĕ уборкăри ĕçсен малтанхи итогĕсене пĕтĕçтерсе, колхозниксене кам лайăх ĕçлени, кам кая юлса пыни çинчен, пирĕн бригада пĕрремĕш бригадăпа ăмăртса ĕçлени çинчен, çав бригадăран пирĕн ниепле те кая юлма юраманни çинчен каласа патăм.

— Пĕрремĕш бригадăран тем тесен те юлмастпăр, иртсе те каятпăр,—терĕç колхозниксем. Тепĕр кунне нумай колхозниксем нормăсене иртерсе тултарчĕç.

— Пĕр сăмахпа, эпĕ ăмăрту çинчен колхозниксене кулленех аса илтерсе тăтăм, вĕсем хĕрсех ĕçлерĕç. Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн бригада малта пырать,—тесе вĕçлет хăйĕн сăмахне Агафья Яковлева.

Çав колхозăн ытти бригадисем те кая юласшăн мар. Анчах ку бригадăсенче 3-мĕш бригадăри хĕрÿлĕх çитеймест-ха. Бригадăсем хушшинчи [illegible]

ĕçлерĕç. Вĕсем куллен бригадăсенче пулса, колхозниксене фронтри пурнăç çинчен, Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çинчен, нимĕç захватчикĕсем вăхăтлăха йышăнса илнĕ районсенче совет çыннисене асаплантарни çинчен каласа кăтартаççĕ. Çапла колхозниксен ĕçри хастарлăхне, вĕсем тăшмана хаяррăн курайманнине татах та ытларах ÿстереççĕ.

Ăмăртăва агитаторсем хушшинче те организациленĕ. Агитаторсенчен кашни хăй çине агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе татăклă обязательствăсем илнĕ. Колхозниксем хушшинче туллимар вăтам шкул директорĕ Христина Борисовна Шишкова юлташ уйрăмах нумай ĕçлет. Вăл тÿрех уйхирте, звеньевой пулса ĕçлесе, колхозниксене хăйĕн примерĕпе хавхалантарса пырать, вăл фронтри тата тĕнчери событисем çинчен каласа панисене колхозниксемпе колхозницăсем пурте тимлĕн итлеççĕ. Агитаторăн витĕмлĕ сăмахĕ тылри патриотсене хамăрăн тăван [illegible]

Николай АСАНОВ,
Çĕрпÿ районĕнчи «Емĕт» колхоз.

ЧĂВАШ АССР НАРКОМПРОСĔ
чĕлхесĕр ачасен Кушнарти тата Чашламари шкулĕсен, çавăн пекех тата суккăр ачасен Чуварлейри туллимар вăтам шкулĕн подготовительнăй тата ытти класĕсене те вĕренекенсем илесси çинчен пĕлтерет.

Ку шкулсене 8 çул тултарнă ачасене е унтан аслисене те илеççĕ. Ку шкулсене вĕренме кĕнĕ ачасене укçасăрах тăрантарса усраççĕ, тумтирсем те укçасăрах параççĕ, çавăн пекех вăл шкулсен общежитийĕсенче те укçасăрах усраççĕ.

Ачасене ĕçе вĕрентме ку шкулсенче пуринче те мастерскойсем пур.

Заявленипе пĕрле документсем ямалла: хăçан çурални çинчен калакан свидетельство, сывлăх çинчен врач панă справка, старши классене кĕрес текенсен тата ку таранччен вĕренни çинчен калакан справкăна памалла.

Шкулсен адресĕ çапла:
1. Козловка, Чувашской АССР, дер. Чешлама, директору школы глухонемых детей.
2. Козловка, Чувашской АССР, дер. Байгулово, директору школы глухонемых детей.
3. Гор. Алатырь, Чувашской АССР, Чуварлейский бор, директору неполной средней школы слепых детей.

Чăваш АССР Наркомпросĕ.

Çыхăну Халăх Комиссариачĕн радиотрансляци линийĕсен дирекцийĕ пур учрежденисемпе организацисене çакăн çинчен пĕлтерет: 1943 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа радиотрансляци линийĕсен дирекцийĕ, Çыхăнăвăн Шупашкарти конторинчен уйăрălса, хăйне уйрăм баланс çине куçнă.

Радиошăн тÿлемелли абонемент укçине Госбанкăн Чăваш конторинчи 14607-мĕш №-лĕ расчетнăй счет çине куçарса тăмалла.

Парăма кĕнисем тÿлев укçине 5 кун хушшинче парса татмасан, радио точкисене линирен кăларса пăрахаççĕ, вара çĕнĕрен кĕртес пулсан черет çитсен тин кĕртсе параççĕ.

Радиотрансляци линийĕсен дирекцийĕ.

ЧĂВАШДРЕВПРОМСОЮЗА яланхи ĕçе çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: паросиловой хуçалăх инженерĕ, мебель тĕлĕшпе ĕçлекен инженер е техник, йывăç татас тĕлĕшне ĕçлекен инженер, оргтогдел инструкторĕ, планпа экономика отделĕн пуçлăхĕ, ĕç ушкăнне ертсе пыракан, плановик, хаксем мĕнле пулса пынине пĕлсе тăракан экономист, конъюнктурист, экономист-финансист, системăн главнăй бухгалтерĕ, [illegible].
Ĕç укçи смета тăрăх.
Çак адреспа пĕлтермелле: гор. Чебоксары, Заводская, 12, Чувашдревпромсоюз.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 167

Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6 53 88 п. л.